ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КАНАШ ХУЛИ ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КАНАШ МУНИЦИПАЛЛĂ ОКРУГЕ МУНИЦИПАЛЛĂ ПЕРЛЕХСЕНЕ УЛĂШТАРАССИ ÇИНЧЕН ТАТА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН МУНИЦИПАЛЛĂ ПЕРЛЕХЕСЕН ЧИККИСЕНЕ ПАЛĂРТАССИ ТАТА ВЕСЕНЕ МУНИЦИПАЛЛĂ ОКРУГĂН ТАТА ХУЛА ОКРУГЕН СТАТУСНЕ ПАРАССИ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2024 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

1. Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕн 13 статйин 3^3-мĕш пайĕпе килĕшӳллĕн хула округне – Чăваш Республикин Канаш хулине тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округне çĕнĕрен йĕркеленĕ "Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ" муниципаллă пĕрлĕхпе улăштарас, çак ĕçе вĕсене пĕрлештерсе, Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн представительлĕ органĕсем халăх килĕшĕвне палăртса туса ирттереççĕ.

2. Çапла палăртас: çак статьян 1-мĕш пайĕнче кăтартнă муниципаллă пĕрлĕхсене пĕрлештернипе пулнă çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхе "Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ" ятпа муниципаллă округ статусне парас.

Çĕнĕрен йĕркеленĕ "Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ" муниципаллă пĕрлĕхĕн административлă центрĕ Канаш хули пулса тăрать.

3. Çĕнĕрен йĕркеленĕ "Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ" муниципаллă пĕрлĕхе туса хунă кун çак Саккун вăя кĕнĕ кун пулать.

4. Чăваш Республикин Канаш хули тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ çак Саккун вăя кĕнĕ кунран пуçласа муниципаллă пĕрлĕх статусне çухатаççĕ.

2 статья

1. Çĕнĕрен йĕркеленĕ "Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ" муниципаллă пĕрлĕхĕн чиккине Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн статусне парасси çинчен" 2004 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕпе палăртнă чиккипе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Канаш хула округĕн тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пĕр-пĕринпе чикĕленекен чиккисене кĕртмесĕр палăртас.

2. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн территорийĕн йышне муниципаллă пĕрлĕхсем шутланман халăх пурăнакан çак вырăнсем кĕреççĕ:

1) Канаш хули;

2) Асхва ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Асхва, Вырăскас Пикших, Аслă Мами, Уйкас ялĕсем;

3) Атнаш ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Атнаш, Калиновка ялĕсем;

4) Ачча ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Ачча сали, Çĕнĕ Ачча, Йăлмачча, Кушăк, Катек ялĕсем, Ачакс разъезчĕ;

5) Пайкилт ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Пайкилт, Çĕнĕ Мами, Тăрăн ялĕсем;

6) Вăтапуç ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Вăтапуç сали, Кайăкьяль, Çатăрка Çырми ялĕсем;

7) Карăклă ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Çăлпуç, Карăклă, Юмансар ялĕсем;

8) Кăшнаруй ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Шăхаль, Шуркасси салисем, Улаксар, Аслăял, Тури Сурăм, Анат Сурăм, Зеленовка, Йĕрĕхçырми, Кăшнаруй, Пушарпуç, Ямпах, Ешкилт ялĕсем;

9) Уçырма ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Уçырма, Кĕлтеçулĕ ялĕсем, Зеленый, Новый поселокĕсем;

10) Ăвăспӳрт Кипеч ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Ăвăспӳрт Кипеч сали, Хурăнлăх ялĕ;

11) Вăрăмпуç ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Вăрăмпуç, Пĕршенер ялĕсем;

12) Çĕнĕ Чăлкасси ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Хурамал, Малти Тукай, Çĕнĕ Чăлкасси, Ушанар ялĕсем, Чăнкăвар, Шăхасан Выççăлкки выçăлккисем;

13) Çеçпĕл ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Анаткас, Матьшӳ, Малтикас Шĕкĕр, Çеçпĕл ялĕсем;

14) Вăтакас Кипеч ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Иккĕмĕш Высоковка, Пĕрремĕш Высоковка салисем, Çӳлти Вăрманьял, Кайри Ăнтавăш, Анат Вăрманьял, Анаткас Кипеч, Малти Ăнтавăш, Вăтакас Кипеч, Çĕнĕ Туçа, Чулкăмака ялĕсем, Кипеч разъезчĕ;

15) Сухайкасси ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Сухайкасси ялĕ;

16) Сиккасси ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Сиккасси сали, Яманкасси ялĕ;

17) Вăрманкас Ухман ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Вăрманкас Ухман сали, Чăрăшкасси ялĕ;

18) Хучел ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Алешево, Микушка, Хучел, Хунав, Ямурсавар ялĕсем, Муллавар выçăлкки;

19) Чакаç ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Тури Юнтапа, Мăкăр, Чакаç ялĕсем, Кармами Выççăлкки, Çĕнĕ Кипеч, Çĕнĕ Мами Выççăлкки выçăлккисем, Мăкăр разъезчĕ;

20) Шаккăл ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Шаккăл сали, Çĕнĕ Ахпӳрт, Кивĕ Ахпӳрт ялĕсем;

21) Шелттем ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Çĕнĕ Вăрăмпуç, Кашкăрçырми, Маяк, Çĕнĕ Шелттем, Кивĕ Шелттем ялĕсем;

22) Энтрияль ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Энтрияль сали, Виçпӳрт, Хыçалкас, Матькасси, Çĕнĕ Пинер ялĕсем;

23) Шăхасан ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Шăхасан сали, Сител ялĕ;

24) Ямаш ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Ямаш сали, Пратьякас Енĕш, Вăрман Енĕш, Имель, Малти Питтикасси ялĕсем;

25) Янкăлч ял поселенийĕ администраци-территори единицин йышне кĕрекен Янкăлч сали, Пукăртан, Анаткас Татмăш, Çĕнĕ Юнтапа, Çĕнĕ Шуртан, Сивçырма, Вăтакас Татмăш ялĕсем, Янкăлч разъезчĕ.

3 статья

1. Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пĕрремĕш суйлаври депутачĕсен Пухăвĕн шутне 31 депутат тесе палăртас, депутатсене муниципаллă суйлавра пурне те тивĕç тан тата тӳрĕ суйлав правипе вăрттăн сасăласа виçĕ çуллăха суйлаççĕ.

Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн йышне депутатсене пĕр мандатлă суйлав округĕсем тăрăх суйлаççĕ.

2. Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пуçлăхне полномочисен пĕрремĕш срокне çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕнче конкурс комиссийĕ конкурс результачĕсем тăрăх тăратнă кандидатсен йышĕнчен виçĕ çуллăха суйласа лартаççĕ, тата вăл вырăнти администрацие ертсе пырать.

Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пуçлăхĕн должноçĕн кандидатурисене суйласа илмелли конкурса ирттермелли йĕркене çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕ палăртать.

Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн Уставĕ вăя кĕриччен çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пуçлăхĕ:

1) çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн ячĕпе ытти муниципаллă пĕрлĕхсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе, патшалăх влаçĕн органĕсемпе, гражданселпе тата организацисемпе хутшăнса ĕçлет, çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн ячĕпе шану хучĕсĕр ĕçлет;

2) Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕ йышăнакан нормативлă право акчĕсене алă пусать тата вĕсем çинчен халăха пĕлтерет;

3) хăйĕн полномочийĕсен шайĕнче право акчĕсем кăларать;

4) Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн черетсĕр ларăвне ирттерме требовани лартма пултарать;

5) Раççей Федерацийĕн нормативлă право акчĕсемпе, Чăваш Республикин нормативлă право акчĕсемпе тата муниципаллă право акчĕсемпе палăртнă ытти полномочисене пурнăçлать.

4 статья

1. Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕсен суйлавне ирттерме палăртас, суйлава хатĕрленсе ирттерес ĕçе Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе тата Чăваш Республикин саккунĕсемпе палăртнă йĕркепе тата сроксенче туса пыраççĕ.

2. Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн депутачĕсен суйлавне ирттермелли суйлав округĕсен схемине суйлава йĕркелекен суйлав комиссийĕ суйлав ирттересси çинчен калакан йышăнăва официаллă майпа пĕлтернĕ кунран пуçласа пилĕк кунран кая юлмасăр çирĕплетет.

5 статья

1. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем хăйсен компетенцийĕпе килĕшӳллĕн Раççей Федерацийĕн патшалăх влаçĕн органĕсемпе, Чăваш Республикин

патшалăх влаçĕн органĕсемпе, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе, физически тата юридически сăпатсемпе хутшăнса вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен правопреемникĕсем пулса тăраççĕ, çав органсем çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округне туса хунă кун тĕлне тивĕçлĕ территорире вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас енĕпе полномочисем пурнăçласа пынă.

2. Право куçăмĕн ыйтăвĕсене çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн муниципаллă право акчĕсемпе йĕркелеме тивĕçлĕ.

3. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн муниципаллă право акчĕсемпе вырăнти администрацисен органĕсем, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем маларах йĕркеленĕ муниципаллă учрежденисем, предприятисемпе организацисем тĕлĕшпе (вĕсем е вĕсем хутшăннипе çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округне туса хунă кун тĕлне тивĕçлĕ территорире вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас полномочисене пурнăçласа пынă) право куçăмĕн ыйтăвĕсене йĕркеличчен вырăнти администрацисен тивĕçлĕ органĕсем, муниципаллă учрежденисем, предприятисем тата организацисем хăйсен ĕç-хĕлне вĕсен малтанхи йĕркелӳпе право формине сыхласа хăварса малалла пурнăçласа пыраççĕ.

6 статья

Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округне туса хунă кун тĕлне тивĕçлĕ территорире вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас полномочисене пурнăçласа пынă вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем йышăннă муниципаллă право акчĕсем çак Саккун вăя кĕриччен, çавăн пекех çак Саккун вăя кĕнĕ кунран пуçласа çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркеленĕ кунччен федераци саккунĕсене тата Раççей Федерацийĕн ытти нормативлă право акчĕсене, Чăваш Республикин Конституцине, Чăваш Республикин саккунĕсене тата ытти нормативлă право акчĕсене, çавăн пекех çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн Уставне, çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн ытти муниципаллă право акчĕсене хирĕçлемен пайра вăйра тăраççĕ.

7 статья

1. Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2024 çулхи бюджечĕсене Чăваш Республикин Канаш хули тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ тăрăх уйрăм пурнăçлаççĕ.

2. Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2024 çулхи бюджечĕсем çинчен тунă йышăнусене улшăнусем кĕртессипе çыхăннă полномочисене çаксем пурнăçлаççĕ:

1) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн пĕрремĕш ларăвĕн кунĕччен – Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн представительлĕ органĕсем;

2) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн пĕрремĕш ларăвĕн кунĕнчен пуçласа – çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕ.

3. Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2024 çулхи бюджечĕсене пурнăçлассипе çыхăннă полномочисене çаксем пурнăçлаççĕ:

1) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеличчен – Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕсем;

2) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеленĕ кунран пуçласа – çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕ.

4. Раççей Федерацийĕн бюджет тытăмĕн бюджечĕсенчен 2024 çулта уйăрса паракан укçа-тенкĕне шутлас ĕçе Раççей Федерацийĕн бюджет саккунĕсемпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин Канаш хули тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕ тăрăх уйрăм тăваççĕ.

5. Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2024 çулхи бюджечĕсене пурнăçлани çинчен калакан отчетсене çаксем тăваççĕ:

1) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеличчен – Чăваш Респуб-

ликин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕсем кашни муниципаллă пĕрлĕх тăрăх уйрăм;

2) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеленĕ кунран пуçласа – çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕ кашни муниципаллă пĕрлĕх тăрăх уйрăм.

6. Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2024 çулхи бюджечĕсене пурнăçлани çинчен калакан отчетсене пăхса тухас тата çирĕплетес ĕçе çаксем тăваççĕ:

1) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн пĕрремĕш ларăвĕн кунĕччен – Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн представительлĕ органĕсем;

2) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн пĕрремĕш ларăвĕн кунĕнчен пуçласа – Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн кăтартнă представительлĕ органĕ.

7. 2025 çултан пуçласа Раççей Федерацийĕн бюджет тытăмĕн бюджечĕсемпе бюджетсем хушшинчи хутшăнусенче çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн бюджечĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пĕрлехи бюджечĕ пек шутланать.

8. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2025 çулхи тата планпа пăхнă 2026 тата 2027 çулсенчи тапхăрти бюджет проектне çаксем тăваççĕ:

1) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеличчен – Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕсем;

2) çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеленĕ кунран пуçласа – çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕ.

9. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн 2025 çулхи тата планпа пăхнă 2026 тата 2027 çулсенчи тапхăрти бюджетне çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Ка-

наш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕ çирĕплетет. Енчен те бюджет çинчен калакан йышăну иртсе пыракан финанс çулĕ пуçланиччен вăя кĕмесен, бюджета вăхăтлăх тытса пырас ĕçе Раççей Федерацийĕн бюджет саккунĕсемпе килĕшӳллĕн туса пыраççĕ.

8 статья

1. Çак Саккун вăя кĕнĕ кунран пуçласа 2024 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕччен куçăм тапхăрне палăртаççĕ.

2. Куçăм тапхăрĕ вăхăтĕнче çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркелеççĕ, çавăн пекех çак Саккунпа пăхса хăварнă ытти ыйтусене татса параççĕ.

3. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркеличчен Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн территорийĕсенче çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтăвĕсене татса парас полномочисене çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхе туса хунă кун тĕлне тивĕçлĕ территорире вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас полномочисене пурнăçласа пынă вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем пурнăçлаççĕ.

4. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене йĕркеличчен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен компетенцине кĕрекен вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусем тăрăх муниципаллă право акчĕсене Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем йышăнаççĕ, палăртнă йĕркепе алă пусаççĕ тата пичетлеççĕ (халăх патне çитереççĕ).

5. Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвне йĕркеленĕ кунран пуçласа Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн суйланнă пуçлăхĕ должноçа ларнă кунччен çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округне туса хунă кун тĕлне тивĕçлĕ территорире вырăн пĕлтерĕшлĕ ыйтусене татса парас полномочисене пурнăçласа пынă Чăваш Республикин Канаш хулин пуçлăхĕ Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕн 36 статйин 4-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă полномочисене пурнăçласа пырать.

6. Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн депутачĕсен Пухăвĕн пĕрремĕш ларăвне ирттернĕ кунран пуçласа Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн представительлĕ органĕсен полномочийĕсем вĕçленеççĕ.

Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пуçлăхĕ должноçа ларнă кунран пуçласа Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пуçлăхĕсен полномочийĕсем вĕçленеççĕ.

Çĕнĕрен йĕркеленĕ муниципаллă пĕрлĕхĕн Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацине йĕркеленĕ кунран пуçласа Чăваш Республикин Канаш хулин тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн администрацийĕсен полномочийĕсем вĕçленеççĕ.

9 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн статусне парасси çинчен" 2004 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 61 №; 2007, 73, 75 №-сем; 2009, 82 №; 2011, 89, 92 (I том) №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 10 №; 2016, 4, 6 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, çу уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕ, 0000000000000124, 0000000000000125 №-сем, раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000439 №) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 1 статьян виççĕмĕш абзацĕ хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

2) 2^{8} статья хăйĕн вăйне çухатнă тесе йышăнас;

3) çакăн пек çырса 2^{23} статья хушса хурас:

"2^{23} статья

Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округне Канаш хулине администраци центрĕ туса муниципаллă округ статусне парас (52^{23}-мĕш хушса çырни).";

4) 3-мĕш, 4-мĕш тата 52^{8}-мĕш хушса çырнисем хăйсен вăйне çухатнă тесе йышăнас;

5) çакăн пек çырса 52[23]-мĕш хушса çырни хушса хурас:

"Чăваш Республикин
"Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен
чиккисене палăртасси тата вĕсене
муниципаллă округăн тата хула округĕн
статусне парасси çинчен" саккунĕ çумне
52[23]-мĕш хушса çырни

Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн йышне кĕрекен халăх пурăнакан вырăнсен переченĕ

1) Канаш хули

2) Асхва ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Асхва ялĕ

Вырăскас Пикших ялĕ

Аслă Мами ялĕ

Уйкас ялĕ

3) Атнаш ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Атнаш ялĕ

Калиновка ялĕ

4) Ачча ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Ачча сали

Çĕнĕ Ачча ялĕ

Йăлмачча ялĕ

Кушăк ялĕ

Катек ялĕ

Ачакс разъезчĕ

5) Пайкилт ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Пайкилт ялĕ

Çĕнĕ Мами ялĕ

Тăрăн ялĕ

6) Вăтапуç ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Вăтапуç сали

Кайăкьяль ялĕ

Çатăрка Çырми ялĕ

7) Карăклă ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Çăлпуç ялĕ

Карăклă ялĕ

Юмансар ялĕ

8) Кăшнаруй ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Шăхаль сали

Шуркасси сали

Улаксар ялĕ

Аслăял ялĕ

Тури Сурăм ялĕ

Анат Сурăм ялĕ

Зеленовка ялĕ

Йĕрĕхçырми ялĕ

Кăшнаруй ялĕ

Пушарпуç ялĕ

Ямпах ялĕ

Ешкилт ялĕ

9) Уçырма ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Уçырма ялĕ

Кĕлтеçулĕ ялĕ

Зеленый поселокĕ

Новый поселокĕ

10) Ăвăспӳрт Кипеч ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Ăвăспӳрт Кипеч сали

Хурăнлăх ялĕ

11) Вăрăмпуç ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Вăрăмпуç ялĕ

Пĕршенер ялĕ

12) Çĕнĕ Чăлкасси ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Хурамал ялĕ

Малти Тукай ялĕ

Çĕнĕ Чăлкасси ялĕ

Ушанар ялĕ

Чăнкăвар выçăлкки

Шăхасан Выççăлкки выçăлкки

13) Çеçпĕл ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Анаткас ялĕ

Матьшӳ ялĕ

Малтикас Шĕкĕр ялĕ

Çеçпĕл ялĕ

14) Вăтакас Кипеч ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Иккĕмĕш Высоковка сали

Пĕрремĕш Высоковка сали

Çӳлти Вăрманьял ялĕ

Кайри Ăнтавăш ялĕ

Анат Вăрманьял ялĕ

Анаткас Кипеч ялĕ

Малти Ăнтавăш ялĕ

Вăтакас Кипеч ялĕ

Çĕнĕ Туçа ялĕ

Чулкăмака ялĕ

Кипеч разъезчĕ

15) Сухайкасси ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Сухайкасси ялĕ

16) Сиккасси ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Сиккасси сали

Яманкасси ялĕ

17) Вăрманкас Ухман ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Вăрманкас Ухман сали

Чăрăшкасси ялĕ

18) Хучел ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Алешево ялĕ

Микушка ялĕ

Хучел ялĕ

Хунав ялĕ

Ямурсавар ялĕ

Муллавар выçăлкки

19) Чакаç ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Тури Юнтапа ялĕ

Мăкăр ялĕ

Чакаç ялĕ

Кармами Выççăлкки выçăлкки

Çĕнĕ Кипеч выçăлкки

Çĕнĕ Мами Выççăлкки выçăлкки

Мăкăр разъезчĕ

20) Шаккăл ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Шаккăл сали

Çĕнĕ Ахпӳрт ялĕ

Кивĕ Ахпӳрт ялĕ

21) Шелттем ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Çĕнĕ Вăрăмпуç ялĕ

Кашкăрçырми ялĕ

Маяк ялĕ

Çĕнĕ Шелттем ялĕ

Кивĕ Шелттем ялĕ

22) Энтрияль ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Энтрияль сали

Виçпӳрт ялĕ

Хыçалкас ялĕ

Матькасси ялĕ

Çĕнĕ Пинер ялĕ

23) Шăхасан ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Шăхасан сали

Сител ялĕ

24) Ямаш ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Ямаш сали

Пратьякас Енĕш ялĕ

Вăрман Енĕш ялĕ

Имель ялĕ

Малти Питтикасси ялĕ

25) Янкăлч ял поселенийĕ администраци-территори единици:

Янкăлч сали

Пукăртан ялĕ

Анаткас Татмăш ялĕ

Çĕнĕ Юнтапа ялĕ

Çĕнĕ Шуртан ялĕ

Сивçырма ялĕ

Вăтакас Татмăш ялĕ

Янкăлч разъезчĕ".

10 статья

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Федерацин "Раççей Федерацийĕнче вырăнти хăй тытăмлăха йĕркелемелли пĕтĕмĕшле принципсем çинчен" 2003 çулхи юпа уйăхĕн 6-мĕшĕнчи 131-ФЗ №-лĕ саккунĕн 34 статйин 5-мĕш пайĕпе пăхса хăварнă сăлтавсем пулман чухне çак Саккунăн 3-мĕш статйи çак Саккун вăя кĕнĕ кунран пуçласа пĕр уйăх иртсен вăя кĕрет.

3. Чăваш Республикин "Чăваш Республикин муниципаллă пĕрлĕхĕсен чиккисене палăртасси тата вĕсене муниципаллă округăн тата хула округĕн статусне парасси çинчен" 2004 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнчи 37 №-лĕ саккунĕ çумне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2004, 61 №; 2007, 73, 75 №-сем; 2009, 82 №; 2011, 89, 92 (I том) №-сем; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2015, 10 №; 2016, 4, 6 №-сем; "Республика" хаçат, 2017, чӳк уйăхĕн 22-мĕшĕ; 2021, нарăс уйăхĕн 25-мĕшĕ, çу уйăхĕн 19-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 2-мĕшĕ; 2022, ака уйăхĕн 6-мĕшĕ, юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ; "право21.рф" сеть кăларăмĕ, 2022, чӳк уйăхĕн 2-мĕшĕ, 0000000000000124, 0000000000000125 №-сем, раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ, 0000000000000439 №) 52^{8-1}-мĕш тата 52^{8-2}-мĕш хушса çырнисемпе çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн чиккине, Чăваш Республикин Канаш хула округĕн тата Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн пĕрпĕринпе чикĕленекен чиккисене кĕртмесĕр, палăртма кирлĕ пайра усă кураççĕ.

4. Çĕнĕрен йĕркеленĕ Чăваш Республикин Канаш муниципаллă округĕн чиккине Раççей Федерацийĕн саккунĕсен требованийĕсемпе килĕшӳллĕн сăнласа парас тата çирĕплетес ĕçе 2024 çулхи раштав уйăхĕн 31-мĕшĕнчен кая юлмасăр тумалла.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О. Николаев

Шупашкар хули
2024 çулхи çу уйăхĕн 17-мĕшĕ
29 №